52. Райзосен главнăй зоотехникĕсене — районри колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне тата выльăх-чĕрлĕхе пăхмалли, тăрантармалли правилăсене пурнăçланине тĕрĕслесе тăракан государственнăй контролерăн ĕçĕсене туса пыма хушас.

Райисполкомсене райзосен главнăй зоотехникĕсем тăратнă тăрăх колхозсене, колхозсен сӳрĕк ĕçлекен руководителĕсене тата выльăх-чĕрлĕх фермисен заведующийĕсене çакăн чухлĕ штраф тӳлеттерме право парас: колхозсене — 1000 тенкĕ таран, уйрăм руководительсене хăйсен шутĕнчен — 100 тенкĕ таран.

53. Облисполкомсене, крайисполкомсене, союзлă тата автономиллĕ республикăсен совнаркомĕсене, ВКП(б) обкомĕсене, крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене колхозсенче 1941 çулта выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстернĕшĕн хушса тӳленипе тӳлеменнине тĕрĕслеме хушас; хушса тӳлемен колхозсенче колхоз правленийĕсен колхозниксене тивĕçлĕ таран хушса тӳлемелле. 1942 çулта пур колхозсен те СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстернĕшĕн колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлемелли çинчен» йышăннă постановленине пĕр пăркаланмасăр пурнăçламалла.

* * *

54. Облисполкомсене, крайисполкомсене, союзлă тата автономиллĕ республикăсен совнаркомĕсене, ВКП(б) обкомĕсене, крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене 1942 çулта ĕнесĕр колхозниксене колхозсем урлă пăрусем сутăн илме пулăшассине организацилеме хушас.

Пăрусем илме чи малтан красноармеецсен çемьисене пулăшас пулать.

55. Кашни колхоз умне, вырăнти парти, совет тата çĕрĕç органĕсем умне 1942—1943 çулсенче кашни колхозрах обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли кирлĕ çуртйĕрсем, выльăх шутне малалла ӳстерме тата унăн продуктивноçне хăпартма юрăхлă та çителĕклĕ çуртйĕрсем тăвас задача лартас.

Облисполкомсене, крайисполкомсене, союзлă тата автономиллĕ республикăсен совнаркомĕсене, ВКП(б) обкомĕсене, крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене икĕ уйăх хушшинче кашни колхозрах выльăх-чĕрлĕх валли çуртйĕрсем çителĕклипе çителĕклĕ маррине тата вĕсем мĕнле тăнине тĕрĕслес ĕçе организацилеме хушас; кашни колхозрах выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсем мĕнле тăнине тата выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсем тăвас тĕлĕшпе те, пуррисене майласа ярас тĕлĕшпе те колхозăн мĕнле ĕçсем тумаллине кăтартса актсем çырмалла, колхозсене хĕллехи вăхăтпа усă курса кирлĕ строиматериалсене хатĕрлеме тата турттарса тухма хушас.

56. СССР Наркомземне пĕр уйăх хушшинчи срокра ĕç выльăхĕпе продуктивнăй выльăха пăхса усрамалли тата тăрантармалли зоотехнически тата ветеринарнăй правилăсене пăхса туха çĕнетме хушас. Облисполкомсен, крайисполкомсен, союзлă тата автономиллĕ республикăсен совнаркомĕсен çав правилăсене вырăнти условисене юрăхлă туса обязательнăй постановлени йĕркипе кашни колхоз патне çитермелле.

57. Колхозсен, совхозсен тата ялхуçалăхĕнче малта пыракан çынсен çитĕнĕвĕсене сарлака массăсене кăтартмашкăн облисполкомсене, крайисполкомсене, союзлă тата автономиллĕ республикăсен совнаркомĕсене кашни çул кĕркунне районри ялхуçалăх выставкисене туса ирттерме, чи лайăх çитĕнӳсемшĕн премисем пама хушас.

58. Казах, Киргиз, Туркмен, Таджик, Узбек, Азербайджан, Грузин, Армян ССР-сен, Дагестан, Кабардин-Балкар, Калмык, Çурçĕр Осетин, Чечен-Ингуш АССР-сен совнаркомĕсене, Алтай, Орджоникидзе крайисполкомĕсене, Куйбышев, Саратов, Сталинград, Чита тата Чкаловск облисполкомĕсене 1942 çулта тĕвесен, мулсен тата алаксен шутне ӳстермелли плана çирĕм кунлă срокра туса çирĕплетме хушас.

Бурят-Монгол, Коми тата Якут АССР-сен совнаркомĕсене, Красноярск тата Хабаровск крайисполкомĕсене, Архангельск, Омск, Новосибирск, Иркутск облисполкомĕсене колхозсенче 1942 çулта пăлансен шутне ӳстермелли плана çирĕм кунлă срокра туса çирĕплетме хушас.

59. Республикăсен совнаркомĕсене, крайисполкомсене тата облисполкомсене 1942 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана, çавăн пекех тата выльăх апачĕ пухса пымалли задание икĕ эрне хушшинче кашни района, районсенче — кашни колхоза çитерсе пама хушас, 1942 çулта пур колхозсем те СССР Совнаркомĕ 1941 çулти майăн 29-мĕшĕнче «Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх апатне ӳстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановленине пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртмелле тума хушас.

60. Облисполкомсене, крайисполкомсене, союзлă тата автономиллĕ республикăсен совнаркомĕсене, ВКП(б) обкомĕсене, крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене 1942 çулти апрелĕн 1-мĕшĕнчен колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен работниксен облаçри, крайри тата республикăри совещанийĕсене туса ирттерме, çав совещанисенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне, çамрăк выльăха сыхласа усрама тата выльăха лайăхрах хĕл каçарма кирлĕ мероприятисене сӳтсе явма хушас. Çак постановлени тăрăх союзлă республикăсен совнаркомĕсен тата компартисен Центральный Комитечĕсен, крайисполкомсен, ВКП(б) крайкомĕсен, автономиллĕ республикăсен совнаркомĕсен, облисполкомсен тата ВКП(б) обкомĕсен решенисем йышăнмалла тата вырăнти хаçатсенче пичетлесе кăлармалла.

61. Облисполкомсене, крайисполкомсене, союзлă тата автономиллĕ республикăсен совнаркомĕсене, ВКП(б) обкомĕсене, крайкомĕсене, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене çак постановление пурнăçа кĕртсе пынине тăтăшах тĕрĕслесе пыма хушас, уйăхра пĕр хутран кая мар ВКП(б) обкомĕн, крайкомĕн тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсен бюровĕсенче, облисполкомсенче, крайисполкомсенче тата совнаркомсенче — выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç районсенче мĕнле пынине, ВКП(б) райкомĕсен бюровĕсенче тата райисполкомсенче — выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç колхозсенче мĕнле пынине пăхса тухма, выльăх шутне ӳстермешкĕн палăртса хунă плана кутьте мĕнле пулсан та пурнăçа кĕртме кирлĕ мерăсене йышăнма хушас.

Берлинри радион черетлĕ элекĕ пирки

Çак кунсенче Берлинри радио нимĕç войскисем пысăк çĕнтерӳ турĕç тесе пĕтĕм тĕнчене хыпар сарнă. Тăрта, Ильмень кӳлли районĕнче, 7-мĕш гвардейски дивизие çавăрса илсе пĕтерсе тăкнă, трофейăсем тата документсем тытса илнĕ, тесе пĕлтернĕ.

Анчах та фашистла борзописец перипе чĕрсе пĕтерсе тăкнă çак пĕр дивизи гитлеровецсене сахал пек туйăннă. Пĕтерес-тĕк пĕтересех пулать! Çитменнине, канцелярире ларнă çĕртех советăн дивизийĕсене пĕтерсе тăкас ĕç вăл фронтра пĕр красноармееца та пулин пĕтерсе тăкассинчен чылай çăмăлтарах. Шăпах çавăнпа ĕнтĕ гитлеровецсем 7-мĕш гвардейски дивизие «пĕтерсе тăкнă» хыççăн, совет кавалерин 80-мĕш, 27-мĕш дивизийĕсене, 327-мĕш стрелковăй дивизине, унтан советăн 26-мĕш дивизийĕн чаçĕсене «пĕтерсе тăкнă», тесе пĕлтерчĕç.

Нимĕçсен радионе итлекенсем тата нимĕç хаçачĕсене вулакансем Геббельспа унăн помощникĕсем намăса пĕлмесĕр элек сарнине итлеме хăнăхнă ĕнтĕ, вĕсем Берлинра шутласа кăларакан çĕнĕ элексене час-часах пĕр хăлхаран кĕртнĕ те тепринчен кăларса янă. Гитлеровецсен черетлĕ элекне радио тăрăх итленĕ е хаçатра вуланă хыççăн вĕсем çапла çеç калаççĕ: «Йытă вĕрет те — çил илсе каять», теççĕ.

Çапах та гитлерла пропагандăна сарас ĕçре юлашки вăхăтра хăшпĕр улшăну пулни палăрать. Гитлерла пропагандăна никам та ĕненмен пирки гитлерсен, герингсен, геббельссен, хăйсен официальнăй тата çурма официальнăй хыпарĕсем тулашран та пулин ĕненмеллерех пулччăр тесе, темĕн тĕрлĕ те хăтланса пăхма лекет.

Вăрçăн малтанхи тапхăрĕнче Геббельс ведомстви хăш тĕлте тата мĕнле дивизисене пĕтерсе тăкнине кăтартса чăрманмасăрах, совет дивизийĕсемпе армийĕсене пачки-пачкипе «çавăрса илнĕ» тата «пĕтерсе тăкнă» пулсан, халĕ ĕнтĕ апла мар. Халĕ гитлеровецсем нимĕç войскисен пулман çĕнтерĕвĕсем çинчен пулнă тесе сӳпĕлтетнĕ чух, ĕненмеллерех тухтăр тесе, совет дивизийĕсен номерĕсене хăшĕ малтан аса килет, çав номерсене илсе кăтартаççĕ.

7-мĕш гвардейски дивизипе çӳлте асăннă дивизисем çинчен пĕлтерни те Берлинри элексĕсем çав меслетпех тунă черетлĕ элек пулса тăрать.

Мĕнле тăраççĕ-ха, сăмахран, ĕçсем 7-мĕш гвардейски дивизире? 7-мĕш гвардейски дивизийĕн командирне полковник Бедина сăмах парăпăр.

«Никам та, вăл шутрах эпĕ те, сисе юлаймасăрах, эпĕ командир пулса ертсе пыракан дивизие нимĕçсем çавăрса илсе пĕтерсе те тăкнă иккен, — тесе çырать Бедин юлташ Совинформбюрона. — Эпĕ, дивизи командирĕ пулса тăраканскер, гитлерла элексĕсенчен мăшкăлласа кулмасăр чăтса тăма, Берлинри радион черетлĕ элекне тăрă шыв çине кăлармасăр тăма нипле те пултараймастăп.

Германи командованийĕн пирĕн дивизин ĕçĕсемпе пĕр хут кăна мар паллашма тӳрĕ килнĕ, пĕр хут кăна мар вăл гвардеецсен вăйне тӳссе курнă. Рамушеври хирĕç тăмалли çирĕплетнĕ вырăна пĕтерсе тăкас тĕллевпе пынă çапăçу ку тĕлĕшрен уйрăмăнах палăрса тăрать. Рамушеври хирĕç тăмалли çирĕплетнĕ вырăн халăх пурăнакан 10 пунктран тăнă. Кашни пункчĕ — оборонăн вăйлă участокĕ пулнă. Çав участоксем персе тăрас тĕлĕшрен те, чĕрĕ вăйсемпе хутшăнса тăрас тĕлĕшрен те пĕр-пĕринпе тачă çыхăннă пулнă.

Хирĕç тăмалли çирĕплетнĕ çав вырăна тӳррĕн илме питĕ хĕн пулнă, çавăнпа та эпир аякран кайса çавăрса илес меллĕ уçă куртăмăр. Противникăн подразделенийĕсем пĕр-пĕринпе çыхăннă вырăнсене тупса, эпир уйрăм опорнăй пунктсем хушшинчи çулсене пӳле-пӳле хутăмăр та тăшмана çине-çинех вирлĕн пырса çапрăмăр.

Рамушево ялне çухатнă хыççăн нимĕçсем сапаланса кайса кĕнтăр еннелле чакасшăн пулчĕç, анчах та унта вĕсене пирĕннисемех кĕтсе илчĕç, вĕсен пĕр пайне çавăнтах пĕтерсе тăкрĕç.

Противника хыçранах хăваласа пырса, эпир халăх пурăнакан 4 пункта тытса илсе вĕсене оккупантсенчен ирĕке кăлартăмăр. Эпир хамăр çул çинче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 3.334 виллине куртăмăр. Кунсăр пуçне тата, вырăнти халăх каласа панă тăрăх, нимĕçсем Ловать шывĕн пăрĕ айне питĕ нумай вилесем янă пулнă. Мĕн каламалли пур ĕнтĕ, хăйсен вĕçĕсене шыва пытарма хăтланнă.

Эпир çакна уççăнах палăртрăмăр: Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче пынă çапăçусенче 7-мĕш гвардейски стрелковăй дивизи нимĕçсен 16-мĕш армийĕн çак подразделенийĕсене аркатса тăкнă: 30-мĕш пехотнăй дивизири 46-мĕш пехотнăй полкăн 2-мĕш батальонне, 32-мĕш пехотнăй дивизири 94-мĕш пехотнăй полкăн 2-мĕш батальонне, «Тотенкопф» («Вилĕ пуç») СС дивизийĕнчи 1-мĕш пехотнăй полкăн 1-мĕш батальонне, çав дивизин саперсăй батальонне, 30-мĕш артполкăн 9-мĕш батарейине, 30-мĕш дивизири 46-мĕш полкăн 2-мĕш пулеметнăй ротине, 32-мĕш пехотнăй дивизири 96-мĕш пехотнăй полкăн 3-мĕш батальонĕнчи 8-мĕш пулеметнăй ротăна, 13-мĕш ве[illegible]итнăй полкăн 3-мĕш ротине, 6-мĕш запаслă ПТО дивизионĕн пĕрремĕш ротине, 30-мĕш пехотнăй дивизири 6-мĕш пехотнăй полкăн 5-мĕш ротине, 123-мĕш пехотнăй дивизири 415-мĕш пехотнăй полкăн 5-мĕш ротине тата номерсĕр маршевăй подразделенисене.

Пире пĕтерсе тăкмашкăн Берлинра васкарĕç. Анчах нимĕçсен халăх пурăнакан 44 пункта хăварма тиврĕ, эпир вара çав пунктсене йышăнса илсе вĕсенче çирĕпленсе лартăмăр тата малалла куçса пыратпăр. Рамушеври узелшăн пынă çапăçусенче эпир çакнашкал трофейăсем тытса илтĕмĕр: 5 танк, 3 самолет, 37 оруди, 152 автомашина, 29 миномет, 50 пулемет, 1695 винтовка, 13.113 снаряд, 150 парашют тата ыттисем те.

Германи командованийĕ мухтанса пăхтăр-ха: вĕсем пирĕн дивизирен хăть пĕр оруди те пулсан, хăть пĕр миномет та пулсан тытса илнĕ-и, пирĕн автомашинăсенчен пĕри те пулсан вĕсен аллине лекнĕ-и? Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнчи çапăçусенче эпир çапăçу хирне хамăр вооруженипе пурлăхсенчен пĕр япалана та пăрахса хăварман, тесе пĕтĕм ответлăха туйса калама пултаратпăр. Çапăçусем вăхăтĕнче сиенленнĕ пулеметсене, орудисене, минометсене тата хамăрăн ытти тĕрлĕ мĕнпур техникăна васкавлăн юсанă, юсатпăр тата çапăçусенче вĕсемпе çĕнĕрен усă куратпăр.

Нимĕçсен штабĕсене аркатса тăкнă чухне эпир документсем нумай тытса илнĕ, çавсен шутĕнчех нимĕçсен 2-мĕш армейски корпус командирĕн Брокдорф графăн приказĕсене те тытса илнĕ, вĕсенчен пĕр пайĕ çинчен Совет пичечĕнче пĕлтернĕ ĕнтĕ. Пирĕн дивизин штабĕ çинчен калас пулсан, пирĕн мĕнпур подразделенисен штабĕсем çинчен каланă пекех, çакна калас пулать: пирĕн пур штабсем те пĕр вĕçĕмех ĕçлесе пынă, халĕ те татти-сыпписĕрех ĕçлесе пыраççĕ, войскăсене ертсе пырас тĕлĕшпе хăйсен ĕçĕсене туса пыраççĕ. Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнчи çапăçусенче пирĕн коммуникацисене тăшман пăсайман. Пире хупăрласа илнĕ тесе каланине çакăн хыççăн ĕнтĕ кам ĕнентĕр-ха?

Паллах, Берлинра çĕр айĕнчи бомбоубежищĕре ларнă çĕрте пĕр-пĕр борзописеца совет гвардеецĕсен дивизине «çавăрса илме» тата «пĕтерсе тăкма» йывăр мар. Анчах та фронтăн пирĕн патăрти участокĕсенче пулкаланă фрицсем 7-мĕш гвардейски стрелковăй дивизин вăйĕ çинчен пачах урăхла шухăшлаççĕ. Акă, сăмахран, мĕн каланă пирĕн пата тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Гейнц Моргенштерн:

«Малашне вырăссемпе вăрçнинчен ним усси те пулас çуккине эпир уççăнах куртăмăр, çитменнине тата пире пĕтĕмпех хупăрласа илнĕ. Вырăссем пирĕнтен хăюллăрах, паттăртарах, вĕсем пире çĕнтереççех — çакна кашни салтаках хăй ăшĕнче лайăх туйса тăрать. Эсир хăвăр çĕршывăра хӳтĕлетĕр, эпир вара «каноненфлейш» çеç — Гитлер аллинчи тупă ашĕ çеç пулса тăратпăр».

46-мĕш пехотнăй полкăн 2-мĕш пулеметнăй ротинчи салтак Георг Вернер та çавнах калать:

«Çичĕ кун хушши пынă çапăçусенче пирĕн ротăра 180 çынран чĕррисем пурĕ те 7 çын çеç юлчĕç. Пирĕн батальонăн ытти ротисенче те 15—30-шар салтак кăна юлнă».

Германи пропагандине туса пыракансем нимĕçсен 16-мĕш армине çавăрса илни çинчен Совет Информаци Бюровĕ çырса пĕлтернине сирсе пăрахма ăнăçсăр хăтланса пăхрĕç. Вĕсем çĕнĕ хыпар шутласа кăларнă, нимĕçсене мар нимĕш, 7-мĕш гвардейски стрелковăй дивизине хăйне çавăрса илнĕ те, вăл вара пысăк çухатусем тунă иккен. Анчах та фактсем вĕсем — çирĕп япаласем. 7-мĕш гвардейски стрелковăй дивизи пурăнать, çапăçать, нимĕç захватчикĕсене çĕмĕрнĕ, çĕмĕрет, малашне те çĕмĕрсе пырĕ».

Чăннипе ĕçсем çакăн пек ĕнтĕ, çакăн пек ĕнтĕ фактсем. Вĕсем, полковник Бедин çырăвĕнчен курăннă тăрăх, гитлерла борзописецсен мухтанчăк та ăссăр суйине пĕтĕмпех ӳпĕнтерсе яраççĕ.

Нимĕçсен радио пĕлтерĕвĕнче асăннă ытти совет дивизийĕсене, нимĕçсем «пĕтерсе тăкнă» тенĕскерсене илсен те çакнах калас пулать: вĕсем пурăнаççĕ, çапăçаççĕ, нимĕç оккупанчĕсене çĕмĕреççĕ тата вĕсене аркатса пĕтерсе тăкиччченех çапăçĕç.

СОВИНФОРМБЮРО.

УЧИТЕЛЬСЕМПЕ ВĔРЕНЕКЕНСЕН ПАХА ĔÇĔСЕМ

КАЛИНИНО. Тăван çĕршыв оборонине ытларах та ытларах çирĕплетес тата мухтавлă Хĕрлĕ Çара активлăн пулăшас тĕллевпе тăрăшса ĕçлесси районри учительсем хушшинче анлăн сарăлса пырать. Районри учительсен вăйĕпе, ПВХО значокĕсем илме 5620 çынна (çак шутран колхозниксем хушшинче 3341 çынна) хатĕрленĕ.

Вĕреннĕ вăхăтрах учительсемпе вĕренекенсем колхозсене кулленхи ĕçре пысăк пулăшусем параççĕ. Иртнĕ кĕркунне 350 гектар çинчен çĕрулми пуçтарса кĕртсе панă. Кунсăр пуçне учительсемпе вĕренекенсем авăн çапас ĕçе тата строительство ĕçĕсене те активлăн хутшăннă. Районри учительсемпе вĕренекенсем çĕршыв оборонин фондне 10.889 тенкĕ укçан тата 22.110 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем панă. «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума 5.889 тенкĕ пухса хывнă. Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă боецĕсем валли ăшă япаласем: 86 тир, 43 мулаххай, алшăлли, ăшă носкисем 63 мăшăр, 54,8 килограмм çăм тата ытти япаласем те панă.

Б. ШОРНИКОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 15-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

нă: «Ман пата мĕнле те пулсан мас ярса парăр. Манăн ыйпе-йĕмсем пыйтăсемпе тулса ларчĕç. Эпĕ ÿт-тире юн юхатчĕнех хыçатăп. Пĕтĕм ÿт-тир кĕсенсемпе витĕнчĕ».

* * *

Орел облаçĕнче Лыково ялĕнче пурăнакан çынсем гитлеровецсен тискер ĕçĕсем çинчен акт çырнă. Актра çапла каланă: нимĕçсем Лыково ялĕнчен тухса кайнă чух яла пур енчен те вут тивертсе хăварнă. Колхозниксен пурăнмалли 100 çуртĕ тата кил таврашĕнчи çуртсем çунса кайнă. Çынсем вутран подвалсемпе нÿхрепсенче тата шăтăксене пытанса çăлăнма хăтланнă. Нимĕçсем вĕсем çине гранатăсем ывăтнă, çăлăнма хăтланакан çынсене пулеметсемпе автоматсенчен персе вĕлернĕ. Нимĕç бандичĕсен çакăн пек тискер ĕçне пула ялти 730 çынран 50 çын анчах чĕрĕ юлнă. Вилнисем хушшинче Гусева Мария Васильевна—60 çулта. Унăн ывăлĕсем Павел 19 çулта, Анатолий 17 çулта, Николай 12 çулта тата хĕрĕ Антонида 13 çулта, Ключкин Геннадий Анисимович тата унăн арăмĕпе икĕ ывăлĕ, Михаил Алексеевич Малюткин, унăн арăмĕ тата çамрăк ывăлĕ, çавăн пекех тата ытти хĕрарăмсем, старриксем, ачасем нумай. Николай Артемова, 5 çулти ачана, граната ванчăкĕ лекнипе аманнăскере, подвалтан чакаланса тухма хăтланнăскерне, нимĕçсем фашистла бандичĕ штыкпа чиксе вĕлернĕ.

* * *

Польша партизанĕсен Августов хули сывăхĕнче кĕрешекен пысăк отрячĕ нимĕçсен боеприпассем турттарса пыракан поездне ÿпĕнтерсе янă.

Мартăн 15-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Мартăн 15-мĕшĕнче фронтра нимĕнле пысăк улшăнусемех те пулман.

Мартăн 14-мĕшĕнче нимĕçсен 20 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 9 самолет пĕтнĕ.

* * *

Мартăн 14-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен 8 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 85 автомашинине, боеприпассем турттаракан 35 лавне, горючи тултарнă автоцистернине, 14 орудине, 29 минометне, зенитнăй пулеметсен 17 точкине пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, боеприпассем усракан 4 склада сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине 3 батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче пирĕн сывлăшран антарнă часть противникăн хаяр контратакине сирсе пăрахнă. Нимĕçсен 500 çынна çити вилнĕ тата аманнă. Çапăçура тăшманăн танкне çапса çĕмĕрнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн йĕлтĕрçĕсен батальонĕ, вăйлă çапăçусем туса иртернĕ хыççăн, халăх пурăнакан В. пунктран нимĕçсене хĕссе кăларнă. Противникран тытса илнĕ трофейăсем хушшинче пĕр танк, 3 пулемет, 2000 патрон тата тĕрлĕ çар хатĕрĕсем нумай.

* * *

Нимĕçсен батальонĕ, виçĕ танк пулăшса пынипе, пирĕн гвардейски стрелковăй чаçри подразделени йышăнса илнĕ С. ялĕ çине контратака тунă. Гитлеровецсем тапăнса килнине хирĕç гвардеецсем çирĕппĕн тăнă, тăшманăн атакине сирсе пăрахнă, нимĕçсен пысăк çухатусем пулнă. Çапăçура кĕçĕн лейтенант Коваль юлташ хăйĕн паттăрлăхне уйрăмах кăтартнă. Тăшманран тытса илнĕ противотанковăй пушпа тăшман çине çавăрса лартса Коваль юлташ нимĕçсен танкĕсене хирĕç пеме пуçланă та пĕр танкне çĕмĕрнĕ, ытти танкĕсем каялла çавăрăнса тарнă. Çак çапăçура красноармеец Коротаев юлташ нимĕçсен 3 салтакне тÿрех персе вĕлернĕ те станковăй пулемет тытса илнĕ.

* * *

Взвод командирĕ Данилов тата политрук Горделан ертсе пынипе 11 красноармеец укреплени тунă вырăнтан нимĕçсене хĕссе кăларнă та противникăн окопĕсене тытса илнĕ. Гитлеровецсем, хăйсен сухатнă позицине каялла тавăрас тесе, пирĕн хăюллă 13 паттăра хирĕç 9 танк кăртсе янă. Пирĕн боецсем çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсемпе тата танка хирĕç пемелли гранатăсемпе усă курса тăшманăн пĕр танкне çунтарса янă тата икĕ танкне çĕмĕрнĕ. Нимĕçсен ытти танкĕсем каялла çавăрăнса тарнă.

* * *

Карелин противник йышăнса илнĕ районĕсенче кĕрешекен И. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ пĕр уйăх хушшинче финсен темиçе гарнизонне çĕмĕрсе тăкнă тата çав çапăçусенче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 218 çынна вĕлерсе пĕтернĕ. Çапăçусенчен пĕринче партизансем финсен салтакĕсемпе офицерĕсене 18 çынна тыткăна илнĕ, вĕсене фронт линийĕ урлă каçарса пирĕн чаçăн штабне çитернĕ. Çав отряд нумаях пулмасть финсен икĕ штабĕ çине тапăннă. Финсен офицерĕсем вырнаçнă çурта хупăрласа илсе, партизансем вĕсем çине гранатăсем пăрахнă.

* * *

Пирĕн чаçсем нимĕçсен 17-мĕш пехотнăй дивизинчи 21-мĕш полка пана приказа тытса илнĕ. Полка çĕнĕрен пынă çынсем çапăçу валли мĕнле хатĕрленни çинчен приказ çакна кăтартса парать: «Çав çынсенчен нумайăшĕ фронтра пулса курман-ха. Çапăçура пулма вĕсене çителĕксĕр вĕрентсе хатĕрленĕ. Çĕнĕрен килнĕ çынсем хушшинче пĕр пулеметчик та çук. Вĕсен шухăш-кăмăлĕсем япăх».

* * *

Нимĕçсен салтакĕ Вилли Байер нумаях пулмасть Регенсбург хулине Карл Грешель патне çакнашкал çыру çырса янă: «Пирĕн вилсе пĕтме тивет. Умра та, хыçра та, пур çĕрте те выррссем. Вĕсен атакисене чарса тăма пирĕн вăй-хăват питĕ сахал. Час-часах çĕнĕ çынсене ярса тăраççĕ пулин те, пирĕн ротăра халĕ стройра мĕнпурĕ те 15 çын çеç. Ытти ротăсенче те çавнашкалах».

* * *

Нимĕçсен запасра тăракан старши ефрейторĕ Хаузер çумĕнче хăйĕн савнă хĕрĕнчен илнĕ çырăва тупнă. Унта çапла каланă: «Мана кĕвĕçмесен те пултаратăн, кунта çамрăк çынсем çук. Арçынсем сахалланнăçемĕн сахалланса пыраççĕ. Вăрçă хыççăн вĕсем пачах та юлмĕç».

* * *

Кымпулунга сывăхĕнчи тусем çинче (Румыния) çартан тарса килнĕ Румыни салтакĕсен хĕçпăшаллă ушкăнĕсем куранма пуçланă. Февраль уйăхĕн вĕçĕнче ушкăнсенчен пĕри, шоссе çулĕ çинче виçĕ çăмăл машинăна чарса, нимĕçсен машинăсем ăшĕнче ларса пыракан 9 офицерне персе вĕлернĕ, вĕсен хĕçпăшалĕсемпе патронĕсене тытса илнĕ.

Мартăн 16-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Мартăн 16-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле пысăк улшăнусемех те пулман.

* * *

Ленинград фронтĕнчи уйрăм участоксенче кĕрешекен пирĕн чаçсем икĕ кун хушшинче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 1.800 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Артиллерирен персе тата пирĕн разведчиксем активлăн çапăçса, тăшманăн çĕрпе йывăçран тунă 10 огневой точкине çĕмĕрнĕ, нимĕçсен танкне, полевой орудине, зенитнăй пулеметсен 4 точкине, 3 пулемета расчечĕсемпе пĕрлех пĕтерсе тăкнă, трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Старши лейтенант В. Ломанов красноармеецсен ушкăнĕпе пĕрле тăшманăн тылне кĕрсе кайнă та, çулсем пĕрлешнĕ вырăнта тăшманăн резервĕсене фронт патне ирттерсе ямасăр 10 кун хушши тытса тăнă. Халăх пурăнакан В. пунктшăн пынă çапăçура Ломанов юлташ хăйĕн боецĕсемпе пĕрле нимĕçсене 40 çуртран хăваласа кăларнă. Противник пысăк çухатусем тÿснĕ. Çак çапăçура Ломанов юлташ хăй 15 нимĕçе вĕлернĕ.

* * *

Пирĕн разведчиксем тăшманăн батарейипе боеприпассен складĕ хăш вырăнта вырнаçни çинчен пĕлтернĕ. Лейтенант Замский командир пулса ертсе пыракан батарея тĕл персе противник батарейин расчетне часах пĕтерсе тăкнă. Совет артиллерисчĕсем çакăн хыççăн боеприпассен складĕсем çине пеме тытăннă. Взрыв пулнисем кĕрлесе кайнă. Боеприпассен çĕр айĕнчи нÿхрепĕсем сывлăша сирпĕннĕ. Взрывсем темиçе сехет хушши пынă, тата янрани 10 километра илтĕннĕ.

* * *

Нимĕç захватчикĕсем оккупациленĕ совет хулисемпе ялĕсенчи çынсем гитлеровецсене çапса аркатас ĕçре Хĕрлĕ Çара активлăн пулăшаççĕ. Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче колхозник Лука Забелин нимĕçсен икĕ салтакне çуна çине лартса пынă. Наступлени туса пыракан совет боецĕсем çывхарнине курсан, гитлеровецсем вăрмана тарса пытанма хăтланнă. Анчах та Забелин пĕр нимĕçĕн аллинчи автоматне туртса илнĕ те тепĕр нимĕçне хĕçпăшалсăрлантарнă, тăшмансене пирĕн чаçа пырса панă. Н. ялĕнче Федорова колхозницăран виçĕ фашист хăйсене тĕттĕм пуличчен пытарма ыйтнă. Колхозница килĕшнĕ: Федорова вĕсене пытарнă та çавăнтах яла пырса кĕнĕ красноармеецсене çакăн çинчен каласа панă.

Пирĕн боецсем Федорова юлташ патне пырса гитлерăн кăмака айне пытаннă вояккĕсене туртса кăларнă.

* * *

Румынсен 5-мĕш бригадинчи 2-мĕш артполкăн 2-мĕш батарейинчен тыткăна лекнĕ салтак Константин Сведек çапла каласа панă: «Румынсен çарĕнче дезертирсен шучĕ ÿссех пырать. Дезертирсене тытма ятарласа кавалери чаçĕсене уйăрнă, çапла пулин те дезертирсен шучĕ чакмасть, ÿссех пырать. Нумаях та пулмасть пирĕн батарейăран виçĕ салтак тарчĕç».

* * *

Нимĕç ефрейторĕ Адольф Шмидт çумĕнче унăн йăмăкĕ çырнă çырăва тупнă. Вăл хăйĕн çырăвĕнче çапла пĕлтерет: «Эсĕ тавçăрса ил-ха, кунта кашнин патнех килĕрен çÿресе атă е урана тăхăнмалли урăх япала тупаççĕ те пурне те пама хушаççĕ».

* * *

Смоленск облаçĕнчи Кончеево, Яковлево тата Заовражье ялĕсенчен тухса кайнă чух нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем колхозниксен 50 çуртне, колхоз лашисен виçĕ витине, 54 амбара, ялхуçалăх машинисене 120 машина çунтарса янă тата пĕтĕм выльăх-чĕрлĕхсене хăваласа тухса кайнă. Нимĕçсем колхозниксене нимĕн юлмиччĕнех çаратнă.

* * *

Грузин ССР-чи Ватажамеки МТС-ĕнче ĕçлекен çамрăк трактористкăсем ăнăçлăн ĕçлеççĕ. Чиквилидзе юлташ нормăпа икĕ гектар çурă сухалас вырăнне виçĕ гектар ытларах сухалать, Чундуридзе 3,3 гектар сухалать. Çак кунсенче трактористкăсен курсне вĕренсе пĕтернĕ Лакашвили юлташ кулленхи нормăна 150 процент тултарса пырать.

Колхоз машинисене çуракине хатĕрлесе çитерер

Малта пыракансен паха опычĕсем тата вĕсен кăтартăвĕсем

СЕНТЕР. Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен канашлăвĕ 1941 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен итогĕсемпе 1942 çулхи çуракин задачисене сÿтсе явнă. Райисполком председателĕ М. Угольников тата канашлура тухса калаçакансем Сĕнтĕр районĕнчи колхозсем иртнĕ çулта пысăк çитĕнÿсем тунине палăртрĕç.

Иртнĕ çул колхозсем кашни гектартан темиçе центнер тĕштырă туса илчĕç. Фермăсенче кашни сăвакан ĕнерен вăтамран 1.150 литр сĕт суса илнĕ. Тухăçлă ĕçленĕшĕн колхозниксене ĕçшĕн 34 колхозра хушса тÿленĕ. Юманово ялсоветĕнчи «Хĕрлĕ паттăр» колхозра кашни гектартан 16 центнер тĕштырă туса илнĕ. Ку колхозри И. Ахасов колхозникe 354 килограмм, П. Соколов юлташа 344 килограмм хушса тÿленĕ. Пашалукасси ялсоветĕнчи «1-ое Мая» колхоз та вăйлă тырпул туса илчĕ. Кунта кĕрхи тулă кашни гектар пуçне 30 центнер туса илнĕ, иккĕмĕш бригада вара гектартан 35 центнер туса илме пултарнă. Çак бригадăри Т. Кольцова колхозницăна 245 килограмм, А. Прокопьева колхозницăна 180 килограмм, Малова колхозницăна 160 килограмм тулă ĕçшĕн хушса тÿленĕ.

Фермăсенчи выльăх-чĕрлĕхсен йышне тата вĕсен продуктивноçне ÿстернĕшĕн Орининăри «Красное Сормово» колхозăн фермисенче ĕçлекенсене пурне те ĕçшĕн хушса тÿленĕ. Çак ферма районри чи лайăх ĕçлекен ферма шутланать. Кунта уйрăмах орденоноска К. Григорьева телятница пăрусене аван пăхать. 100 ĕнерен вăл 126 пăру илсе пăхса çитĕнтернĕ, пăрушĕсем унăн кунне 1.000 грамм таран хутшăнса пынă. Çапла ĕçленĕшĕн ăна 36 килограмм аш, 104 литр сĕт хушса тÿленĕ.

Районри колхозсем халĕ çуракине хĕрсе хатĕрленеççĕ. Малта пыракан колхозсем ку ĕçре те пысăк çитĕнÿсем турĕç. «Новая Юнга» колхозра çуракине, пĕтĕмĕшпе илсен, хатĕрленсе çитнĕ: вăрлăхсем çителĕклĕ, вĕсене сортласа тасатнă. Уя 4.682 лав тислĕк кăларнă, 62 центнер кĕл, 11 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, ялхуçалăх инвентарĕсене юсанă. Юманово ялсоветĕнчи «Хĕрлĕ паттăр» колхоз та çуракине хатĕрленсе çитет. Вăл та вăрлăхсене сортланă, чĕрĕ вăрлăхсене тăпăтнă. Ялхуçалăх машинисемпе ут таврашĕсем юсавлă.

Анчах пур колхозсем те мар çуракине çителĕклĕ хатĕрленеççĕ. Шатракасси ялсоветĕнчи «Родина», Çатракасси ялсоветĕнчи «Малалла» колхозсем çуракине питĕ япăх хатĕрленеççĕ. Кунта вăрлăх фончĕсене хывса çитермен, вăрлăхсене сортламан, ялхуçалăх машинисем юсавсăр. Кĕçĕн Тюмерли ялсоветĕнчи «Аврора» колхозра уйрăмах лашасене питĕ начар пăхаççĕ. Конюхсем лашасене пăхассине хăйсен хисеплĕ ĕçĕ тесе шутламаççĕ. Лашасен ури айĕнче яланах çур метр хулăмĕш тислĕк купаланса тăрать. Колхозра кĕл, фекали тата ытти удобренисене пухмаççĕ. «Коммунар», «Коминтерн» колхозсен плугĕсем те юр айĕнчех лараççĕ.

Çуракине хатĕрленес ĕçре МТС та япăх ĕçлет. Тракторсене, плугсене, ытти ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтермен. Юсанă тракторсен пахалăхĕ япăх.

Канашлура тухса калаçакансем хăйсен опычĕ çинчен каласа панипе пĕрлех, çуракине япăх хатĕрленекен колхозсене хытă критиклерĕç.

С. НАЛИМОВ.

Ăмăртса ĕçлекен колхоз

СОВЕТСКОЕ. Чемейри «Сеятель» колхоз — районра малта пыракан колхозсенчен пĕри. Колхозниксем кунта çулсеренех вăйлă тырпул туса илеççĕ. Иртнĕ çулта ыраш кашни гектартан 19 центнер, çуртырисем — 22,3 центнер, кĕрхи тулă — 14,6 центнер, урпа — 17 центнер туса илнĕ. Колхозниксем, государство умĕнчи парăмсене срокченех парса татса, ĕçкунĕсем çине пысăк тупăш илчĕç.

Вĕсем кăçал та хăйсен умне вăйлă тырпул туса илес задача лартнă. Çавăнпа та халь колхозниксем çуракине тимлĕн хатĕрленеççĕ. Ялхуçалăх машинисемпе инвентарьсене пурне те юсаса çитернĕ, лайăх йĕркене кĕртнĕ. Лаша таврашĕсем çителĕклĕ те чăтăмлă. Нумаях пулмасть 25 урапа юсарĕç. 18 сÿре, 10 плуг юсанă. Сеялкăсем пурĕ 3, вĕсем те юсавлă.

Агротехника мероприятийĕсене вăхăтра пурнăçласа пыни тухăçлă тырпулăн никĕсĕ пулса тăнине «Сеятель» колхоз членĕсем аван ăнланса илнĕ. Уя тислĕк çителĕклĕ таранах кăларнă, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, кĕл пухса хатĕрленĕ тата минераллă удобренисем кÿрсе килнĕ. Вăрлăхсем таса та сортлă, вĕсене пăсăласран лайăх пăхса тăраççĕ. Акмалли вăрлăхсене районри лабораторире тĕрĕслеттернĕ.

Кольцовка колхоз колхозникĕсен чĕнĕвне сÿтсе-явнă хыççăн колхозра лашасене татах та лайăхрах пăхма тытăнчĕç. Колхозăн çуракинче ĕçлеме пултараймалан лаша пачах та çук. Кунсăр пуçне çамрăк тихасене те кÿлме вĕрентсе çитернĕ.

Колхозри кашни бригада тата уйрăм колхозниксем те çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртеççĕ. Колхоз, «Страж революции» колхозпа ăмăртса ĕçлесе, çуракине кĕске вăхăтра та кăтартуллăн ирттерессе шанать.

Тăван çĕршыва фронт валли ытларах та ытларах тырпул, аш-какай туса памалла,—çакăн пек колхозниксен задачи. Çакна пурнăçлас тесе колхозниксем халь çуракине большевикла хатĕрленеççĕ тата йышлă выльăх-чĕрлĕх усраççĕ, выльăхсен продуктивноçĕ те кулленех ÿссе пырать. Фермăра иртнĕ çулта кашни сысна аминчен 23-шер çăвăр илнĕ. Колхоз кăçалхи çулшăн государствăна аш-какай парса татнă тата колхозниксемшĕн 70 процент тÿленĕ.

Я. СИГАЙ.

КАНМАЛЛИ КУНСЕНЧЕ

Комсомолец Михаил Назаров ирех тăнă та паян, канмалли кун, колхоза çуракине хатĕрленес ĕçре пулăшас шутпа бригадир патне пычĕ.

— Акă сăмах çинех çитрĕ,—терĕ кулса Тăрмăшри Ленин ячĕпе тăракан колхозри 2-мĕш бригадăн бригадирĕ Димитрий Яковлевич.—Сана эпĕ паян пĕр пысăках мар ĕç хушасшăнччĕ-ха. Миша нумай шухăшламарĕ. Вăл мĕнле ĕç хушассине пĕлесшĕн пулса:

— Хушах. Пур ĕçе те хушма пултаратăр. Мĕнле ĕç хушатăр, пурне те тума хавас. Хам та çавăнпа тесех килнĕччĕ,—терĕ.

— Кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухмалла. Çавна сире хушас тетĕп. Килĕшетĕн пуль вĕт?

— Пит хавас, килĕшмесĕр ара,—терĕ бригадир сăмахне хирĕç Миша.

— Ну, апла, юлташ тупатăр та икçĕр кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса çÿретĕр. Паян алласан, вăрлăх çитет, Канашран минерал çăнăхĕ тиесе килмелли çеç юлнă. Вăл та тепĕр ик-виç кунтан çитет,—терĕ бригадир.

* * *

Миша кăçал тулличмар вăтам шкултан аван паллăсемпе вĕренсе тухрĕ. Малалла хăйĕн пĕлĕвне вăтам шкулта ÿстерме шутларĕ. Çав шутпах вăл кăçал ялтан 4 çухрăмри Енĕш-Нăрвашри вăтам шкула пырса кĕчĕ. Халĕ 8-мĕш класра вĕренет. Вĕренÿре малта пыракансенчен пĕри. Пĕр япăх палла та илмест. Ĕлкĕрсе пыраймаканнисене вĕренÿре пулăшса пырать.

Икĕ çул ĕнтĕ комсомол ретĕнче тăрса ытти çамрăксене пример кăтартса пырать. Вĕренекенсем хушшинче пысăк авторитетпа усă курать.

Канмалли кунсенче вăл киле таврăнсан та вăхăта усăсăр ирттермест. Колхоз производствинче хутшăнса ĕçлеме тăрăшать. Халь вăл колхоза çуракине хатĕрленес ĕçре пулăшса пырать. Кашни канмалли кун бригадиртан ĕç пырса ыйтать.

Акă иртнĕ канмалли кун февралĕн 22-мĕшĕнче вĕсем Яшуткин Васлипе пĕрле 20 центнер кĕл тата 5 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Çавăн пекех ытти вĕренекенсем те колхоза çуракине хатĕрленес ĕçре пулăшса пыраççĕ. Уя тислĕк кăлараççĕ, тырă сортлаççĕ, кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухаççĕ. Уйрăмăнах ку ĕçре А. Николаев, А. Иванов, З. Николаев, А. Васильев тата М. Иванов юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Паха примерсем кăтартаççĕ. Вĕсем кашни канмалли кунах колхоза мĕнле те пулсан пулăшу кÿме тăрăшаççĕ.

Г. МАЛАНДЕЙ.

Икэрнелĕхе хутшăннă хыççăн

ÇĔРПУ. ВЛКСМ Обкомĕн решенийĕ тăрăх, мартăн 5-мĕшпе 20-мĕш хушшинче колхозсенче вăрлăхсене тасатса сортлас тĕлĕшпе икэрнелĕх пулса иртет. Пирĕн районри комсомолецсемпе çамрăксем çак икэрнелĕхе анлăн хутшăнчĕç. Колхозсенче комсомолецсемпе çамрăксен бригадисене организацилерĕç. Икэрнелĕхре уйрăмăнах «Чăваш. ЦИК», «Молодая сила», «Союз», «Пучах», «Красный Октябрь» колхозсенчи пуçламĕш организацисем лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. «Чăваш. ЦИК» колхозри комсомолецсен бригади мартăн 10-мĕшĕ тĕлне 170 центнер вăрлăх сортласа тасатса хучĕ. Комсомолăн пуçламĕш организацийĕн секретарĕ Гаврилова юлташ ку ĕçе çамрăксене анлăн явăçтарнă. «Пучах» колхозри В. Васильев, Максимова, Ефимова комсомолецсем те вăрлăхсене сортлас ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем 120 центнер вăрлăх сортланă.

А. ВАСИЛЬЕВ.

Хула валли—ялхуçалăх продукчĕсем

Пĕтĕм совет халăхĕ халĕ хăйĕн мĕнпур вăйне пухса çĕнтерÿ тăвассишĕн кĕрешет. Çĕршывăн фабрикисемпе заводĕсенче миллионшар ĕççыннисем кунĕн-çĕрĕн Хĕрлĕ Çар валли хĕçпăшал тупаççĕ. Çак ответлă тапхăрта социализмлă ялхуçалăхĕнчи ĕççыннисен çĕршыва фронт валли ялхуçалăх продукчĕсем ытларах та ытларах туса памалла. 1942 çулта хамăрăн уйхирсене нихăçанхинчен вăйлăрах тырпул, пахча-çимĕç туса илесси, выльăх-чĕрлĕхĕн продуктивноçне нумай хут ÿстересси оборона ĕçĕ пулса тăрать. Вăл фронт заказĕсене пурнăçласа тăракан пирĕн промышленность предприятийĕсене ытларах та ытларах апат-çимĕç парса тăрас ĕçпе çыхăнать. Çавна пирĕн колхозсемпе колхозниксем лайăх ăнланаççĕ. Вĕсем кăçал нихăçанхинчен те пысăкрах тырпул туса илессишĕн хастарлăн кĕрешеççĕ, выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ÿстерме тăрăшаççĕ. Районра малта пыракан колхозсем чылайĕшĕ çуракине хатĕрленсе çитнĕ темелле. Нумайĕш колхозсем ку ĕçе тимлĕн тума тытăнчĕç.

Çакăнпа пĕрлех малта пыракан колхозсем халĕ промышленность предприятийĕсемпе договорсем туса вĕсене ялхуçалăх продукчĕсем сутма тытăнчĕç.

«Волга» колхоз членĕсем Шупашкарти рабочисене сутма 1 центнер аш-какай, 2 центнер тулă, сухан, пăрçа уйăрчĕç, Калинин ячĕпе тăракан колхоз пĕр центнер тăварланă купăста, 2 центнер пăрçа, «Красное Сормово» колхоз 15 центнер çĕрулми, 5 килограмм çу уйăрнă. «Волгарь», «Социализм», «Советская деревня», Мичурин, Молотов ячĕсемпе хисепленекен колхозсем те Шупашкарта сутма пахча-çимĕç, çĕрулми, сĕт-çу тата çăмарта илсе тухаççĕ. Çак пуçару вăл халĕ питĕ те кирлĕ. Ытлашши продуктсене рабочисене сутни вăл — тăшмана пĕтерсе тăкас ĕçе вăй хушни пулать, пирĕн Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флотне хăвăртрах çĕнтерÿ тума пулăшать.

И. ДОЛГОВ.
ВКП(б) Октябрьски райкомĕн секретарĕ.

Манса хăварнă вулав çурчĕсем

ВĂРНАР. Вулав çурчĕсем хальхи вăхăтра ялсенчи чăн-чăн агитпунктсем пулса тăмалла. Нумай вулав çурчĕсем çапла ĕçлеме тăрăшаççĕ те. Анчах та çак хушăрах пирĕн Вăрнар районĕнче чылай вулав çурчĕсем темиçе уйăхшар хупăнса лараççĕ. Илĕпĕр Кипекри вулав çуртне. Вăл хĕллехи вăхăтра вутă çуккипе питĕрĕнсе тăчĕ. Вулав çурчĕн заведующийĕ М. Трофимова юлташ çÿлтен пырса пулăшасса кĕтсе ларать. Ялсовет председателĕ Синткин юлташ ăна пулăшас пирки нимĕн те тумасть.

Кăмашри тата Пăваялĕнчи вулав çурчĕсем те 5-шер уйăх ĕçлемеççĕ. Ку ялсенчи вулав çурчĕсенче заведующийĕсем те çук. Ялсовечĕ районри çутĕç пайĕнчен вулав çурчĕ валли заведующи яма ыйтсан: «халех культработник яратпăр», тесе шантараççĕ. Анчах яма пулнă культработникĕсем паян куна та çук.

Вулав çурчĕсем хупă ларнăшăн пуринчен малтан Вăрнар районĕнчи çутĕç пайĕ ответлă. Мĕншĕн тесен, районра ĕçлемен вулав çурчĕсем пĕрре анчах мар. Районри çутĕç пайĕ тимлĕн ĕçлесен, вĕсем вутăсăр та, ĕçлекен çынсăр та ларас çук. Вулав çурчĕсем валли заведующи тума çын çук теççĕ пулсан, мĕншĕн уйăрса лартас мар-ха унта вырăнти шкулсенчи обществăллă ĕçе юратакан активнăй учительсене? Учительсене совместительство йĕркипе культпросвет учрежденийĕсенче ĕçлемешкĕн уйăрса лартма Çутĕç халăх комиссариачĕ панă директива та пур.

Ĕçлемен вулав çурчĕсене халех ĕçлеттерме тытăнмалла.

А. НИКОЛАЕВА.

Пĕлтерÿ

МОПР Обкомĕпе Шупашкар горкомĕ 1942 çулхи мартăн 18-мĕшĕнче Париж Коммунипе МОПР кунĕ ячĕпе МОПР-ăн хулари тата Шупашкар гарнизонĕнчи активĕн чаплă ларуне туса ирттереççĕ.

Лару Хĕрлĕ Çар çуртĕнче 20 сехетре уçăлать.

Ларăва кĕме билетсене МОПР ячейкисен секретарĕсем МОПР горкомне (Ленинград урамĕ, 20-мĕш №-лĕ çурт) пырса илмелле.

МОПР Обкомĕпе Шупашкар горкомĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧУВАШСКОМУ ТРЕСТУ
мукомольной промышленности
ТРЕБУЮТСЯ:
главный бухгалтер и бухгалтер-ревизор
Главный бухгалтер будет обеспечен квартирой.
2—1.

СРОЧНО ТРЕБУЮТСЯ
на постоянную работу:
начальник снабжения и сбыта, механик, старший слесарь и дворник.
Предоставляется квартира.
Справляться: ул. Урицкого, 29, телефон 4-73.
Дирекция

Колхоз хĕрĕсем

Ишлей районĕнчи «Ырашпулăх» колхозри хĕрсем çинчен калаçсан, яланах чи малтан виçĕ хĕр ятне асă илеççĕ. Вĕсем: Парасковья Васильева, Евдокия Якимова тата Анна Романова.

Пĕлтĕр колхозниксем колхозри ĕне фермипче ĕнесен йышĕ ÿсменнипе тĕлĕннĕ. Аптăранипе фермăра ĕçлеме Праскине лартса пăхма килĕшнĕ, мĕншĕн тесен колхозниксем ăна шаннă.

Праски хăйне шанса панă ĕçе тÿрре кăларма тăрăшнă. «Çук, пăрусем вилмелле мар, мĕнле те пулин ĕнесен шутне ÿстермелле», тенĕ вăл.

Вăл ырми-канми, кунĕн-çĕрĕн ĕçленĕ. 10 ĕне пăрулаca панă. Праски çамрăк пăрусене пĕчĕк ачасене пăхнă пек юратса пăхнă, таса çĕрте усранă, уçăлтарма илсе тухнă. Майĕпен пăрусем вылякан пулнă. Часах вĕсем ĕнесен шутне кĕнĕ. Çавăншăн колхоз Праскине ĕçшĕн хушса 80 литр сĕт тÿленĕ. Кăçал Праски тата 8 çамрăк пăрĕва пăхса çитĕнтерет. Унăн икĕ пиччĕшĕ Иллепе Андрей тата шăллĕсем Иванпа Петр отечественнăй вăрçăн аслă фрончĕсенче тăшмана хирĕç çапăçаççĕ. Ку вара Праскине фермăра тата та лайăхрах ĕçлеме вăй парать.

Унăн юлташĕ Евдокия пур. Вăл виçĕ çул ытла ĕнтĕ свинарка пулса ĕçлет. Колхозăн сыснисене юратса пăхать. Вăл çамрăк-ха: вунçиччĕ тултарса вунсаккăра пуçнă кăна. Вăл фермăри сыснасен йышне ÿстерме тăрăшать. Иртнĕ çулта сыснасен шучĕ палăрмаллах ÿсрĕ. Евдокия тăрăшса ĕçленине пула колхоз членĕсем те сысналлă пулчĕç. Унсăр пуçне 50 çăвăра кÿршĕри колхозсене сутнă. Лайăх ĕçленĕшĕн Евдокие колхоз ĕçшĕн хушса тÿлерĕ: 12 килограмм туртакан виçĕ çăвăр пачĕ.

Праскипе Евдокин ĕçри юлташĕ Анна икĕ çул хушши ĕнтĕ колхоз лашисене пăхать. Хăй ĕçлеме пуçланăран вара Анна 10 тихана пăхса ÿстерсе лаша тунă. Анна пăхса ÿстернĕ 4 тиха Хĕрлĕ Çар ретне юрăхлă пулнă.

Çапла ĕçлеççĕ «Ырашпулăх» колхоз хĕрĕсем. Праски, Евдокия, Анна пек хĕрсем колхозра сахал мар. Колхоз хĕрĕсем фронта кайнă арçынсем вырăнне тăрса колхоз производствинче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Комсомолка Александра Петрова—колхоз председателĕ, Мария Арсентьева—колхоз бригадирĕ, Акулина Никифорова—кладовщица пулса ĕçлеççĕ.

А. МИХАЙЛОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 79 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № [illegible]